Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

## Автор: Николаева Людмила Петровна

## Книга: Кĕр парни

## Стихотворение: Пĕчĕк пулăшакан

Ĕçлеме пит юрататăп,
Ĕçлемесĕр чун чăтмасть.
Пулăшма ялан васкатăп,
Темшĕн-çке пулсах каймасть.

Ĕçлес кăмăлпа ак тухрăм
Картишне асаттепе.
Мĕнпур пылчăка эп пухрăм –
Асанне сăмахĕпе.

Тăрăшса кĕпе-йĕм çурăм
Сурăм шывĕ хĕрринче.
Йĕп-йĕпе пулчĕ çан-çурăм,
Çук тип вырăн хам çинче.

Пахчара йăран çумларăм,
Çирĕм кăшт сухан ун чух.
Шел, нумай пулăшаймарăм:
Куççуль юхрĕ, чăтма çук.

Çемьепе пĕрле эп килтĕм
Хире утă типĕтме.
Кĕрепле ак алла илтĕм –
Шăлĕ катăлчĕ темме.

Ĕçлеме пит юрататăп,
Ĕçлемесĕр чун чăтмасть.
Пулăшма ялан васкатăп,
Темшĕн-çке пулсах каймасть.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.